манăн санăн пирĕн

# ÇЕМЬЕ

ĕнер паян ыран



Цитата



**Район администрацийĕн ЗАГС пайĕн ертӳçи М.П. РУБЦОВА:**

«ÇЕМЬЕ ĕлĕкренпех халăха тытса тăраканĕ пулнă. Ахальтен мар çемье çирĕп пулсан патшалăх та çирĕп пулать тесе каланă. Юрату тата çемье – çак икĕ пулăмсăр çынсем пурăнаймаççĕ тесе шутлатăп. Кашни çын çемье мĕншĕн кирлĕ пулнине тĕрлĕрен ăнлантарĕ. Анчах та çын телейĕ çемьесĕр пулма пултараймасть.

Статистика та çемьеллĕ çынсем ытларах пурăннине тата сахалрах чирленине кăтартса парать. Çемьере ăшă кăмăлпа, пĕр-пĕрне ăнланса ачасене ӳстерсе пурăнакансем ĕçре те маттуртарах.

Ача ырă çемьере çуралса ӳсни питĕ пĕлтерĕшлĕ. Кашни ачанах ашшĕ те, амăшĕ те кирлĕ. Шел пулин те, юлашки çулсенче пĕччен амăшĕсен хисепĕ нумайланса пырать. Вĕсен ачисем вара пĕчĕкренпех тулли çемьере çуралнисенчен уйрăлса тăраççĕ, мĕншĕн тесен çак ачасем çемьере аслисем пĕр-пĕрне килĕштерсе пурăннине курмаççĕ. Пĕччен амăшĕ вара ачана çемьере мĕн пamallине веçех параймасть. Анчах, темле пулсан та, ачасем çуралнишĕн савăнмаллах. 2008 çулта ача çуратнă 69 амăшĕ ачине пĕччен ӳстерет. Кăçалхи октябрĕн 28-мĕшĕ тĕлне пĕччен амăшĕсем 56.

Çамрăк мăшăрсене пĕрлештернĕ чухне вĕсен пĕрремĕш утăмĕсем илемлĕ Мендельсон маршĕпе пуçланаççĕ. Кайран вара пурнăçĕ уйрăлмалли патне те илсе çитерме пултарать иккен.

Пирĕн районта пĕлтĕр 74 мăшăр уйрăлнă. Çак çемьесенчен 54 çемйинче вара пурĕ 71 çул çитмен ача. Вĕсен хăйсен ирĕкĕсĕр тулли мар çемьере ӳсме тивет.

Халĕ нумай ачаллă çемьесем те хушăнса пымаççĕ. Çемье çавăракансем «çамрăкланса» пыни сисĕнет, анчах та вĕсем пур чухне те ответлăха туйманни самаях пăшăрхантарать. Хăшĕсем ача-пăчаллă пулсан та хăйсен ашшĕ-амăшĕсем çине шанни тарăн шухăша ярать.

Çемьере чи кирли – ашшĕ-амăшĕ ачисене юратни, вĕсене тĕрĕс çул суйласа илме вĕрентни тесе шутлатăп. Çакăн пек çемьесенче килĕшӳ те пулать. Ачисене ура çине тăратма ашшĕ-амăшĕсен вăй çитермеллех.

Çемье ăс-хакăл енчен те, ӳт-пӳ енчен те сывă пулни, хăтлă çуртра пурăнни, лайăх укçа ĕçлесе илме пултарни тата ыранхи кунран хăрамасăр ачасем çуратни – çаксем пулсан çемье аталанса пырĕ.

Икĕ çын пĕр пурнăçпа пурăнни савăнăç та, кӳренӳ саманчĕсем те парнелет. Çулсем иртнĕçемĕн çеç çемье телейĕ мĕнне ăнланса илетĕн. Ăна вара çултан-çул, кунран-кун çирĕплетсех пымалла. Вырăссен паллă çыравçи Лев Толстой çакна пурнăçлама мĕн кирлине те палăртнă: йĕрке, ĕçлени, хастарлăх, улшăнманлăх тата кашни çыннах ырă тăвасси.

Çул çинчи йывăрлăхсене мăшăрăн пĕрле çĕнтерсе пымалла. Çакă вара телейпе танах».

Саккун тавра

## Çемье кодексĕпе паллашатпăр

Çемьере кашнийĕнех хăйĕн тивĕçĕ тата прависем. Çак йĕркене Раççей Федерацийĕн Çемье кодексĕпе çирĕплетнĕ. Анчах та нумай чух, шел пулин те, ашшĕ-амăшĕсем хăйсен тивĕçĕсем пирки мансах каяççĕ. Хăйсене ашшĕ-амăшĕн прависенчен хăтарма ыйту тухса тăрсан тин хăшĕ-пĕри (пурте мар!) каялла çаврăнса шутласа пăхать.

Ачасене воспитани парасси тата вĕрентесси ашшĕ-амăшĕсен тивĕçĕ пулнине çак кодексăн **63 статйинче** питĕ ăнланмалла çырса панă. Акă вăл:

1. Ашшĕ-амăшĕсем хăйсен ачисене воспитани пама тивĕçлĕ. Вĕсем хăйсен ачисен воспитанийĕпе аталанăвĕшĕн яваплă. Вĕсен ачисене сывлăхлă ӳстерессишĕн, ӳт-пӳ, психика, ăс-хакăл тĕлĕшпе аталантарассишĕн тăрăшмалла. Ашшĕ-амăшĕсен ачисене воспитани парассипе правасем ыттисенчен ытларах.

2. Ашшĕ-амăшĕсем ачисене пĕтĕмĕшлĕ тĕп тата вăтам пĕлӳ илме условисем туса парассишĕн яваплă. Ачисен шухăш-кăмăлне шута хурса вĕсем вĕрентӳ учрежденине те, вĕрентӳ мелне те суйласа илме ирĕклĕ.

Çемье кодексĕн **69 статйи** вара ашшĕ-амăшĕсене хăйсен прависенчен хăçан хăтарма ирĕк пуррине кăтартса парать:

ашшĕ-амăшĕсем (е вĕсенчен пĕри) хăйсен тивĕçĕсене пурнăçламаççĕ, алимент тӳлессинчен пăрăнаççĕ пулсан; шута илме тивĕçлĕ сăлавсемсĕр ачана çуратнă хыççăн çав сывату, воспитани паракан, социаллă хӳтлĕхпе тивĕçтерекен тата çавна майлă учрежденинчех хăвараççĕ пулсан; хăйсен прависемпе иртĕнеççĕ, ачисене ӳт-пӳ тата психика тĕлĕшпе хĕсĕрлеççĕ, вĕсен арлăх пурнăçĕн тĕкĕнменлĕхне тапăнаççĕ пулсан; ашшĕ-амăшĕ алкоголизм е наркоманипе чирлĕ пулсан; ачисен е мăшăрĕн пурнăçĕпе сывлăхне хирĕç преступлени тусассăн ашшĕ-амăшĕн прависенчен хăтараççĕ.

Пĕрле чухне

## «Хамăр çине шанатпăр»

***Çурлатри ялĕнчи урамсенчен пĕри – Çамрăксен урамĕ. Пурăнасса çак урамри çамрăк çемьесем питĕ туслă пурăнаççĕ. Пĕр ӳсĕмрисем – пулăшу кирлĕ-и е сĕнӳ-канаш – пĕр-пĕрне яланах аван ăнланаççĕ.***

***Акă иртнĕ кунсенче çак туслă çемьесем пĕр шухăшлă пулса урамра йывăç хунавĕсем лартассипе виçĕ кун таран тимлерĕç. Юнашар вăрмантан вĕрене, пилеш, сирень, юман, çăка хунавĕсене кăкласа килсе урам хушшине лартса тухрĕç. Çак çемьесенчи ашшĕ-амăшĕсенчен пуçласа 1 çулхи ача таран – пурте тăрăшса ĕçлерĕç. Активлăх пулсан вара ĕç те пулать. Çакна кашниех ăнланчĕ. Пушкинсем, Аксендаровсен виçĕ çемйи, Тихоновсем – çаксем вĕсем, пуçарулăх кăтартакансем.***



***Кашни хунава шăварнипе çеç çырлахмарĕç çамрăксем, йывăçсем тавра карта тытма та ӳркенмерĕç. Хăмисене ăçтан тупнă тетĕр-и? Кашнийĕн хуçалăхĕнчех «кирлĕ мар» хăмасем тупăннă иккен.***

***Çак ĕçпе кăна лăпланса пурăнасшăн мар-ха Çурлатрисем, вăй çитерсе ачасем валли парк та йĕркелесшĕн. «Хамăр çине шанатпăр, ыранхишĕн тата хамăрăн ачасемшĕн тăрăшатпăр», – теççĕ туслă урамра пурăнакансем.***

Психолог сĕнет

## Çемьере хирĕçӳсем ан пулччăр тесен

**Чăвашсем çемьере чашăк-тирĕк шакăртатмасăр пулмасть тесе авалах каланă. Ку тĕрĕсех ĕнтĕ. Кашни çын хăйне майлă, унăн хăйĕн тавракурăмĕ. Анчах та икĕ çын çемье çавăрса пурнăç çулĕпе малалла пĕрлех утма шутлаççĕ пулсан, вĕсемшĕн психолог сĕнĕвĕсем те ытлашши пулмĕç.**

1. Хирĕçӳ пулассине сисетĕр пулсан, чарăнма вăхăт, ăна хĕртсе ямалла мар. Пĕр-пĕрне çул памалла. Кун пек чухне «паян – эпĕ, ыран – эсĕ» текен правило та пулăшĕ. Хăшĕ лăпкăрах, унăн теприне те лăпланма пулăшмалла. Хирĕçӳллĕ лару-тăрура усăлса çӳрени, килти вак-тĕвек ĕçсем, ташлани те пулăшать.

2. Çилленнине ырана ан хăварăр. Хирĕçӳ мĕншĕн тухнине ăнланса, çийĕнчех татса пама тăрăшмалла. Пĕр-пĕрне айăплани, критиклени вырăнсăр. Çак лару-тăрура вăл е ку пулăм е япала çинчен хăвăрăн шухăшăра пĕлтерни витĕмлĕрех. Проблемăна татса памалли тĕрлĕ енсем сĕнĕр. Хирĕçекен çыншăн та вĕсенче лайăх майсем пулнине кăтартса парăр.

3. Хăвăрăн пĕлĕшпе е мăшăрпа хирĕçиччен малтан хăвăра мĕн килĕшменнине уççăн палăртăр. Хирĕçӳ яланах вăрçакансенчен пĕрне çеç усăллă. Тепĕр чухне хăвăрăн ĕçе туллин тата эффективлă пурнăçлама пултарайманнипе, уйрăмах мăшăр ĕçĕнче аван ĕлкĕрсе пырать пулсан, ăна «манăн çине тимлĕх сахал уйăратăн» тесе калама ан васкăр. Ку вăл тепĕр çынна кӳрентернипе хăвăра çӳллĕрех хăпартни кăна пулать.



4. Сирĕн пĕлĕшĕн шухăшĕ тĕрĕс мар пулнине пĕлсен те унăн кăмăл-туйăмĕсене мала хурăр. Хăвăра çакнашкал лару-тăрура мĕнле тытнă пулăттăр-ха эсир? Сирĕн çине чалăшрахххăн пăхни пĕрре те сирĕн пата сивĕ туйăмсем пулнине пĕлтермест. Ывăнса çитнине, тарăхнине, ăна темĕн канăç паманнине ăнлантарса парать çеç. Çавăнпа та юнашар çыннăн лару-тăрăвне ăнланма тăрăшăр, хăвăр çинчен кăна ан шутлăр.

Сывлăх

## Компьютер ачана сиен кӳрет-и?

**Кашни ашшĕ-амăшех хăйĕн ачи сывă ӳстĕр тесе тăрăшать. Анчах та паян информаци технологийĕ вăйлă аталаннă вăхăтра çаксем ачан сывлăхĕшĕн хăрушлăх та кăларса тăраççĕ. Сăмахран, тĕслĕх вырăнне компьютера илер-ха. Сиен кӳрет-и вăл ачана? Çак ыйту çине специалист панă хурав кашни ашшĕ-амăшĕшĕнех вырăнлă пулĕ тесе, кăларăмра Çĕнĕ Шупашкарти гигиенăпа эпидемиологи центрĕн Муркаш уйрăмĕнчи пĕтĕмĕшле гигиена врачĕн пулăшаканĕ В. Матвеев панă хурава пичетлетпĕр:**



«Самана хальхи вăхăтра çав тери хăвăрт улшăнса пырать. Пурнăça компьютер технологийĕ хăвăрттăн та анлăн кĕрсе аталанать. Анчах та компьютер пĕр енчен усăллă пулсан, тепĕр енчен сиенлĕ мар-и? Çапла, сиенлĕ. Хальхи çамрăксем, шкул ачисем, шкул çулне çитмен ачасем те компьютер умне ларасшăн антăхсах каяççĕ. Компьютер вĕсене вăйлă илĕртсе тăрать.

Компьютеромани вăл – 21-мĕш ĕмĕрĕн чăнчăн чирĕ. Паллах, шкул ачисен, шкул çулне çитмен ачасен те компьютерпа выляма та пĕлмелле, ĕçлемелле те. Анчах та компьютер умĕнче ларни азарта куçса ан кайтăр тесен, вĕсене асăрхасах тăмалла. Ачасем Интернетран усăллă информаци илччĕр, анчах та вăл çамрăксен ăс-тăнне, кăмăл-сипетне сиен ан кӳтĕр.

Пурте виçеллĕ пулмалла. Енчен те ача компьютер умĕнче ларса хăйĕн пĕтĕм пушă вăхăтне иртterет пулсан, ашшĕ-амăшĕн кун пирки хытах шухăшласа пăхмалла. Хирĕçлеме çук, паянхи вĕренекен компьютерпа ĕçлеме пĕлни питĕ аван, çав вăхăтрах унăн ытти енлĕ пултарулăхне аталантарасси пирки те манмалла мар. Сăмахран, шкулта вĕренекен ачан хускануллă вăйăсене ытларах хутшăнмалла, ӳт-пĕве çирĕплетмелле. Çирĕп ӳт-пӳре – çирĕп ăс-тăн. Çакна манас марччĕ. Компьютер умĕнче выляса ларнипе сывлăхлă пулаймастăн.

Мĕн ачаран спортпа, физкультурăпа тачă туслашмалла, сехечĕ-сехечĕпех тапранмасăр пĕр вырăнта лармалла мар. Хусканусăр пурнăç, уйрăмах çамрăк вăхăтра, нумай чирсем патне илсе çитерет.

Шкул ачине мĕнле те пулин урăх ĕçпе интереслентермелле: вăл час-часах спорт вăййисене хутшăнтăр, ӳкертĕр, йывăçран эрешлесе касса тĕрлĕ япаласем тутăр, тăмран теттесем ăсталатăр, кружоксене çӳретĕр тата ытти те. Çакăн пек чухне вĕсене компьютер сахалрах кăсăклантарать.

Çакна та каласа хăвармалла. Енчен те сирĕн компьютер пур пулсан, монитор çине хӳтлĕх экранне лартма ан манăр, тата компьютер валли ятарлă сĕтел-пукан пулмалла».

Шăпа

## Шанчăк пулсан

***Пурнăç, шăпа тени кашни çыннăн тĕрлĕрен килет. Пĕрисем пирĕн пурнăç хамăрăн алăра теççĕ, теприсем вара çын çут тĕнчене килсенех ăнăн малашнехи пурнăçне «çырса хунипе» килĕшеççĕ. Кашнин хăйĕн ĕненӳ. Муркаш шкулĕнче вĕренекен Елена Васильеван та вăл хăйĕн. Ачаранах инвалид пулсан та, çак хĕр питĕ çирĕп кăмăллă, мал туртăмлă. 16 çулта çеç утма пуçланă хĕршĕн вара пĕрремĕш пулăшаканĕ яланах çемье пулнă. Çавăнпах сăввисенче çамрăк хĕр малашлăха çирĕппĕн пăхни палăрать. Паллашсамăр вĕсенчен пĕринпе.***

Богом дан мне шанс один лишь,
Мне б его не потерять,
Все надежды, обещанья –
Все исполнить, оправдать.
Ведь не зря, что ни прошу я,
Все сбывается всегда.
Иногда так удивляюсь,
Говорю: «Вот это да!»
Всем спасибо, тем, кто верит
В мои силы и не зря,
Обещаю, что вы вскоре
Не узнаете меня.
Тот, кто свыше помогает,
Пусть имеет Он в виду,
Точно знаю, обещаю,
Я Его не подведу.